**«Эпир çĕр çинчех-ха çуралнă…»**

Эпир çĕр çинчех-ха çуралнă –
Хирсен те шывсен ачисем.
Эпир – мăлатуклă, çурлаллă
Çĕршыв çитĕнтернĕ çынсем.

Лĕп çил вăркăшатчĕ пуç çийĕн,
Хаваслăн çиçетчĕ тӳпе...
Кĕçех тупăсен аслатийĕ
Пĕрлешрĕ сăпка юррипе.

Çерçи чĕвĕлтетĕвĕ витĕр
Такам ĕсĕклетчĕ аран.
Çурхи ешĕл курăк çути те
Хăш чух курăнатчĕ хуран.

Пушаннă пӳртре ларнăçемĕн
Тăнлаттăмăр та шăплăха,
Илтетчĕ вилес пек этемĕн
Хĕрӳ чĕнĕвне те хăлха.

Аттесĕр ачалăх тивлечĕ
Синкер хумĕпе çапнине
Сисетчĕ çав чунăм, пĕлетчĕ
Ун пăр пек шăнтан сиввине.

Умрахчĕ-ха – вăйă та кулă.
Умрахчĕ-ха – аслă тĕнче.
Çапах та ир çитнĕ салхулăх
Пурахчĕ кашнин питĕнче.

Вара (тен, ку Вăхăт палли-ши?)
«Мĕскершĕн!» текен куçсемпе
Сире эп сăнаттăм, ял-йышăм,
Сана эп юнаттăм, тӳпе.

Эсир хыпăнса ăс памарăр,
Мăнаçлăх та тӳсĕм кăна
Кашнишĕн виçеллĕн пайларăр –
Çак çеç пуль çын турĕ мана.

*Айташ, Ю. «Эпир çĕр çинчех-ха çуралнă…» / Ю. Айташ // Чăваш литературин антологийĕ. – Шупашкар, 2013. – [Т. 2] : Поэзи. – С. 405.*